

сайт:
putpobedy.ru

# ШКУЛ САССИ

Проект авторĕ – Светлана Чикмякова.



**Сăмах – Санарпуҫĕнчи вăтам шкул ачисене**



## Пĕрлĕхре – вăй, туслăхра – ҫитĕнӳ

**Эпир, 7-мĕш класра вĕренекенсем, питĕ туслă. Ушкăнра пурĕ – 18 ача. Пирĕн класс Афганистан паттăрĕн, Владимир Михайлов пограничникăн, ячĕпе хисепленет. Ҫамрăк пограничниксем вĕренӳре те, спортра та – пур ҫĕрте те маттур пулма тăрăшаҫҫĕ.**



Районта иртекен тĕрлĕ слетсене, йыхравланă уявсене тухса ҫӳретпĕр. Пирĕн пограничниксен костюмĕсем те пур. Вĕсене Люда Никифорова пурин валли те ятарласа ҫĕлеме вăхăт тупрĕ. Ун аллисем ăннипех ылтăн. Атте-аннесем яланах хавхалантарса тăраҫҫĕ, сĕнӳ-канаш параҫҫĕ. Вĕрентекенсем ăмăртусене хутшăнма хатĕрлеҫҫĕ.

Районти пограничниксен, ытти ҫар пĕрлешĕвĕсен хастарĕсен Андрей Николаевăн, Юрий Никифоровăн пулăшăвĕ, вĕсен сĕнӳ-канашĕ те пире малта пыма хистет. Слетсене, ăмăртусене тивĕҫлĕ хутшăнма пĕрмаях ăсталăха туптатпăр. Стройпа утма, командир хушăвĕсене тĕрĕс пурнăҫлама хăнăхатпăр. Автомата вăхăтпа сӳтсе пуҫтарасси те ҫăмăлах мар – ку пĕлĕве те вĕренетпĕр, вăй-хал упражненисене те пурнăҫлама пиҫĕхмелле, пĕрремĕш пулăшу кӳме те хăнăхса пыратпăр. «Пĕрлĕхре – вăй! Туслăхра – ҫитĕнӳ! Вĕренӳре – пирĕн пуласлăх! Спортра – сывлăх!» – тетпĕр.

**Настя СЕМЕНОВА,
7-мĕш класс.**

## Вĕренӳ – пĕлӳ ҫăлкуҫĕ



**Пирĕн шкулта 2018–2019 вĕренӳ ҫулĕнче агрокласс ĕҫлеме пуҫларĕ. Эпир, 10–11-мĕш классенче вĕренекенсем, кăмăлпах занятисене кĕтетпĕр.**

Шупашкарти аграри университечĕпе туслă ҫыхăну йĕркеленчĕ. Унти преподавательсем шкулта биологипе, физикăпа тата математикăпа ăсталăх урокĕсем ирттереҫҫĕ, кăткăс задачăсемпе тестсене «шĕкĕлчеме» хăнăхтараҫҫĕ, ЕГЭ-ре тĕл пулакан йывăр ĕҫсене тишкерсе шутлама вĕрентеҫҫĕ. Тарăннăн, тĕплĕн ăнлантараҫҫĕ. Шкула «Ӳсĕм точки» проектпа тивĕҫнĕ техника университет преподавателĕсемпе онлайн мелпе ҫыхăнма май парать. Лекцисем ҫакнашкал ҫĕнĕлле йĕркепе иртеҫҫĕ.

Агрокласс вĕренекенĕсем тĕрлĕ ял хуҫалăх предприятийĕсемпе паллашрĕҫ, куравсемпе ĕҫлĕ тĕлпулусене ҫитсе килчĕҫ. «Санары» агрофирмăра та часах пулатпăр. Асрах-ха иртнĕ тĕлпулу та. Агрофирма ертӳҫи Андрей Робертович Петров хуҫалăх ĕҫĕ-хĕлĕ, хăватлă тракторсемпе агрегатсем ҫинчен кăсăклă каласа кăтартрĕ. Тырпул тухăҫлăхĕ, типĕ ҫанталăк тăчĕ пулин те, кăҫалхи ҫулшăн аван. Ертӳҫĕ «Санары» хуҫалăха ăста ҫамрăк специалистсене хаваспах йышăнма кăмăл пуррине пĕлтерчĕ.

Вăрнарти аш-какай комбиначĕн Малтикас Ялтăрари выльăх-чĕрлĕх комплексне, аш-какай тирпейлекен цехĕсене ҫитсе курни те пулас профессие суйласа илме витĕм кӳретех. Ҫавăн пекех Шупашкарти 1-мĕш ҫăкăр завочĕн производствипе паллашни те асрах-ха.

Аграри университечĕ йĕркелекен тĕрлĕ конкурссене, олимпиадăсене хастар хутшăнатпăр. Ҫĕнтерӳҫесене Тав хучĕсемпе тата хаклă парнесемпе, укҫа парса хавхалантараҫҫĕ. Агрокласра пĕлӳ илнисем ҫакна ҫирĕплетекен сертификата тивĕҫеҫҫĕ. Ку документ аслă шкула вĕренме кĕнĕ чухне хушма 10 балл парать. Унсăр пуҫне университет студенчĕ пулса тăнă ҫамрăк уйăхсерен 5 пин тенкĕ хушма укҫа илсе тăрать.

Мана агрокласра ăс пухма килĕшет. Патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменĕсене ăнăҫлă тытса университет студенчĕ пулса тăрас ĕмĕт-тĕллевпе хавхаланса вĕренетĕп.

**Даниил ИВАНОВ, 11-мĕш класс.**

## Санарпуҫсем – тăрăшуллă кадетсем



**Эпĕ кадет класĕнче вĕренетĕп. Вăл Ҫĕньял Хапăс ялĕнче ӳссе ҫитĕннĕ Владимир Яковлевич Алексеев ячĕпе хисепленсе тăрать. В.Я. Алексеев – Раҫҫей транспорчĕн тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ, «Порт Коломна» АО ертӳҫи.**

Эпир районта ҫар тата паттăрлăх темипе иртекен конкурссене хаваспах хутшăнатпăр. Мала тухма тăрăшатпăр. Ҫурҫĕр Кавказра ҫапăҫура пулнă ветерансен, запасра тăракан пограничниксен пĕрлехи организацийĕсем ирттерекен мероприятисемпе конкурссене хутшăнатпăр. Ҫамрăк патриотсен слетĕнче «Стройра йăрăс – ҫапăҫура харсăр», «Паттăррăн утатпăр ялав айĕнче» конкурссенче пĕрремĕш вырăнсене ҫĕнсе илтĕмĕр. «Зарница» вăййăра виҫҫĕмĕш пултăмăр.

Пирĕн класри арҫын ачасенчен чылайăшĕ шкулта лайăх вĕренсе пырса, спортпа туслашса ҫар училищисене вĕренме кĕрес тĕллевлĕ. Кадетсем пур ҫĕрте те тăрăшуллă. Вĕренӳре анчах мар, спортра хастар кадет класĕ. Кашни ҫулах районта тата республикăра иртекен шашкăпа шахмат вăййисенче пĕртăван Николайпа Леонид Ермошкинсем малти вырăнсене йышăнаҫҫĕ.

Чылайăшĕ ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен секцине ҫӳрет. Район тата республика шайĕнче ирттерекен ăмăртусенче медальсем, хаклă парнесем илме тивĕҫлĕ пулаҫҫĕ. Ҫак ăмăртусенче Антон Федоров 70 медаль, Саша Васильев 40, Алексей Антонов 33 медаль ҫĕнсе илме пултарчĕҫ. Семен Иванов Вăрнарти хутăш препаратсен завочĕн «Химик-Август» футбол командинче кĕҫĕн класранах вылять, республика тата Раҫҫей шайĕнчи тĕрлĕ ăмăртусене тăтăшах хутшăнать.

Кадет класĕнче вĕренекенсем олимпиадăсемпе конкурссене, наукăпа практика конференцийĕсене хастар хутшăнаҫҫĕ.

Пирĕн класс ертӳҫи Галина Ивановна Егорова. Вăл шкул ачисене воспитани парас енĕпе нумай вăй хурать. Пирĕнтен ҫĕршыва юрăхлă ҫынсем тăвас тесе тăрăшать. Класс сехечĕсем вăхăтĕнче Тăван ҫĕршыва юратма, атте-аннене итлеме, ватта-вĕтте хисеплеме, тăван-пĕтене сума сума, туслăха упрама вĕренетпĕр. Уроксем хыҫҫăн вăхăта кăсăклă ирттеретпĕр, стройпа утатпăр, автомата салатса пуҫтаратпăр, кадет вальсĕ ташлама вĕренетпĕр. Нумаях пулмасть шкулта пуху иртрĕ. Атте-аннене хамăр пултарулăхпа паллаштартăмăр.

**Елизавета БАРДАСОВА, 8-мĕш класс.**

## Спорт правуррисене суйлать

**Ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен секцине пĕрремĕш класранпах ҫӳретĕп. Мана кунта питĕ килĕшет. Ҫак секцие 30 ачана яхăн ҫӳрет.**



Виталий Петрович Трофимов тренер ертсе пынипе тĕрлĕ приема вĕренетпĕр. Республика, район тата регион шайĕнче ирттерекен ăмăртусене хутшăнса Мухтав грамотисемпе Тав хучĕсене тивĕҫрĕм. Манăн 70 медаль, 30 кубок. Чĕмпĕрте, Нижнекамскра, Хусанта пулса курма тӳр килчĕ.

Ку спорт тĕсĕ правур та хăюллă, чăтăмлă пулма хистет. Эпир пĕрпĕринпе кавир ҫинче кĕрешетпĕр. Спорт пурнăҫра вăй-хăват парать, чун ҫирĕплĕхне туптать, вĕренӳре хавхалантарса пырать. Ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен секцинче хăвна ху хӳтĕлеме, тĕрлĕ чăрмава ҫĕнтерсе лартнă тĕллев патне ҫирĕппĕн утма вĕренетĕн. Секцие ҫӳрекенсем валли пур услови те туса панă. Кĕрешмелли залпа юнашар тренажер залĕ пур. Вăл спорт оборудованийĕпе пуян. Унта тренировкăсем ирттеретпĕр.

Санарпуҫ вăтам шкулĕнче мал шухăш-ĕмĕтлĕ ачасем пĕлӳ пухаҫҫĕ. Анастасия Краснова шкулта вĕреннĕ вăхăтрах спорт мастерĕн кандидачĕ пулса тăчĕ. Хăюллă та маттур пулнăран Настя хăй пурнăҫне МЧС-па ҫыхăнтарса инкеке лекнĕ ҫынсене пулăшасшăн. Пирĕн те, кĕҫĕн ăрăвăн, вĕсенчен тĕслĕх илсе пымалла.

**Антон ФЕДОРОВ,
8-мĕш класс.**

## Кĕркунне тыткăнлать



**Ҫулталăкăн кашни вăхăчĕ хăйне евĕр илемлĕ. Эпĕ кĕркуннене кăмăллатăп. Мĕнпе тыткăнлать-ха вăл мана?**

Кĕркунне ҫанталăк темĕнле асамлăх тĕнчине кĕрсе ӳкнĕн туйăнать. Йывăҫсем хĕрлĕ, сарă, хăмăр тум тăхăнаҫҫĕ. Темĕнле ăста ӳнерҫĕ алла сăрă тытнă тейĕн.

Парксемпе аллейăсенче уҫăлса ҫӳремешкĕн кăмăллă. Ура айĕнче ӳкнĕ ҫулҫăсем чăштăртатаҫҫĕ. Вĕсем турккăсен тĕрлĕ тĕслĕ чаплă кавирĕсене аса илтереҫҫĕ. Чунра ырă туйăм хуҫаланать.

Кĕрхи ҫанталăк пĕчĕк ачана аса илтерет. Акă вăл ахăлтатса кулса ярать – тавралăха ылтăн сăн ҫапать, кĕҫех вăл йĕрмĕш ача пек макăрса ярать – сивĕ ҫумăр пĕрĕхтерсе иртсе каять. Ҫил йывăҫ ҫулҫисене татса илет те сывлăшра ҫавăрттарать. Яштака хĕр евĕр хурăнăн сапсарă ҫулҫи татăлать те тинĕсре карап чӳхеннĕн лăпкăн ҫĕр ҫинелле вĕлтĕртетсе вĕҫсе анать.

Тӳпе янкăр кăвак мар. Йăрăмйăрăм тĕксĕм пĕлĕтсем карса илнĕ. Сасартăк шăплăхра тăрнасен салхуллă сасси илтĕнсе кайрĕ. Ăшă еннелле кайма хатĕрленеҫҫĕ ĕнтĕ кайăксем. Чăваш енпе: «Туссем! ҫитес ҫулччен лайăх пурăнăр!»– тесе сывпуллашать карта пуҫĕ.

Хăв сисмесĕрех аллуна сулса кăнтăр хĕнисене ăсататăн, куҫунта кĕмĕл сывлăм шăрҫаланать.

Шухăша путатăн. Ĕмĕтĕм ҫунатлă.

**Эвелина КРАСНОВА,
7-мĕш класс.**

## «Лего» кружока кăмăллатăп



**Мана тăван шкулăмра вĕренме килĕшет. Мĕншĕн тетĕр-и? Питĕ кăсăклă.**

Шкул саккинченех эпир роботсемпе ĕҫлес технологие алла илсе пыратпăр, квадрокоптера вĕҫтеретпĕр. Вăл кнопка пуснипех сывлăша ҫĕкленме пултарни малтанах пире питĕ тĕлĕнтеретчĕ. Роботсене тĕрлĕ программăпа ĕҫ хушсан хăйсемех темĕн те пĕр туса кăтартма пултараҫҫĕ. Пĕр робочĕ, сăмахран, хура йĕр тăрăх кăна чупать, тепри япаласене вырăнтан вырăна куҫарать.

«Лего» кружока пирĕн класс руководителĕ Ирина Алексеевна Тихонова ертсе пырать. Вăл пултаруллă учитель.

3D-куҫлăх тăхăнсан класра ларсах тĕрлĕ асамлă вырăнта пулса курма май пур. Юмах тĕнчине лекнĕн туйăнать. Пĕлетĕр-и, космосран ҫĕр планета ҫине пăхма еплерех кăсăк! Хăвна космонавт пек туятăн вара. Эпир Ирина Алексеевнăпа пĕрле нумай ҫĕршывра пулса куртăмăр, ҫӳллĕ тусем ҫине улăхрăмăр, кăнтăрта пурăнакан чĕрчунсемпе, тинĕсрисемпе куҫа куҫăн паллашрăмăр. Пейзажĕ чуна тыткăнлать!

**Антон ПЕТРОВ,
9-мĕш класс.**

*Тема тăсăмĕ 3-мĕш стр.*

# Чăвашлăх туйăмĕ чунра



**Эпĕ чăваш халăх историне, халапĕсемпе мифĕсене вулама кăмăллатăп, пуян та тарăн шухăшлă йăли-йĕркисене, иксĕлми юрри-ташшине юрататăп. Чăваш тумĕ те епле капăр, илемĕпе тыткăнлать, ман чуна ҫывăх.**

Кĕҫĕн классенче вĕреннĕ чухнех «Чăваш тĕрри», «Чĕвĕлти чĕкеҫ» конкурссене хутшăнаттăм. Вăтам классенче Шупашкарта иртнĕ «Чăваш сăмахĕ» конкурса кайни халĕ те асăмрах. Хумхантăм, пăлхантăм, анчах та сăвва илемлĕ каласа парса призерсен шутне кĕме пултартăм. Паллах, эпĕ шкулти, районти тăван чĕлхепе ҫыхăннă пултарулăх ăмăртăвĕсенче, олимпиадăсенче те хастар. Малараххи ҫулсенче чăваш чĕлхипе олимпиадăра призерсен йышне кĕни мана савăнтарать те, хавхалантарать те.

Кăҫал республикăра Чăваш наци конгресĕ пуҫарнă «Эпĕ сирĕнпе, пин-пин чăваш!» конкурс валли Оксана Титова-Утсин «Чăваш чĕлхи» сăввине илемлĕ вуласа видео ӳкертĕмĕр. Конкурсра иккĕмĕш вырăн йышăнтăм.

Эпир чăвашла шăкăл-шăкăл калаҫатпăр, юрлатпăр, илемлĕ литература хайлавĕсене вуласа киленетпĕр, вĕсенчи сăнарсен ырă е сивлек кăмăлне хаклатпăр. Эпĕ чăваш литература урокĕсене чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Атте-анне те мана хавхалантарса тăраҫҫĕ, ялан пулăшаҫҫĕ.

Ҫирĕп кăмăлпа, ырă пуласлăха шанса вĕренетĕп.

**Катя АНИСИМОВА, 11-мĕш класс.**

# Ăс-тăна туптать



**Шашка-шахмат вăййине мĕн пĕчĕкрен кăмăллатпăр.**

5–6 ҫулта чухнех пушă вăхăта Сергей куккапа пĕрле шашка-шахмат хăми умĕнче ирттереттĕмĕр. Атте те, атте енчи куккасем те шахматпа туслă. Эпир Леня пиччепе иксĕмĕр район тата республика шайĕнче иртекен «Тĕлĕнтермĕш шашкăсем» тата «Шурă ладья» ăмăртусене хутшăнса малти вырăнсене ҫĕнсе илме пултартăмăр.

**Николай ЕРМОШКИН, 8-мĕш класс.**

**Шкулта шашка-шахмат кружокне ертсе пыракан — Александр Иванович Порфирьев. Вăл хавхалантарса пынипе кружока хаваспах ҫӳретпĕр, тавракурăма, ăс-тăна, чăтăмлăхпа шухăшлава аталантаратпăр.**

Шахматра хăвна хирĕҫ выляканăн куҫасăсталăхне тавҫăрса илме пултарни, ăна ҫав вăхăтрах ярса илсе шах е мат лартни те мĕне тăрать!

Санарпуҫ вăтам шкулĕ республикăри «Ӳсĕм точки» («Точка роста») проекта хутшăнни пирĕншĕн усăллă пулчĕ.

Шашка-шахмат ăсталăхне ӳстерме ятарлă кабинет пур. Халĕ эпир пĕчĕк хăмасем умĕнче мар, тĕнче шайĕнчи шахмат чемпионĕсем Карповпа Каспаров евĕр пысăк сĕтел хушшине ларса вылятпăр.



Пирĕн те тăван шкултан лайăх паллăсемпе вĕренсе тухса хамăр юратнă професси алла илесчĕ.

Кăҫалхи вĕренӳ ҫулĕнче пирĕн шкул республикăра иртекен «Шахматсем – шкулта» («Шахматы в школе») проекта хутшăнать. Унпа килĕшӳллĕн 2-мĕш класран пуҫласа шахматла выляма вĕренеҫҫĕ. Ҫак проекта хутшăнсан шашка-шахматла выляканисен шучĕ ҫултан ҫул ӳссе пырасса шанас килет.

**Леонид ЕРМОШКИН, 8-мĕш класс.**

# Манăн ҫемье



**Пирĕн ҫемье питĕ туслă. Эпир ĕҫлеме те, кану вăхăтне те пĕрле ирттерме тăрăшатпăр.**

Манăн аттепе анне, Татьяна Витальевнапа Александр Николаевич Михайловсем, «Рубикон» ятлă предприятие ертсе пыраҫҫĕ. Вĕсем пире, Саша аппапа Миша пиччене, ачаранпах ĕҫе хăнăхтарса пыраҫҫĕ. Юрă-кĕвĕпе те туслă пирĕн ҫемье. Пиччепе аппа Вăрнарти музыка шкулне пĕтернĕ. Эпĕ те 1-мĕш класранпах унта вĕренетĕп, юрлама питĕ юрататăп. Наталья Михайловна Валериановăпа Елена Алексеевна Сухарева преподавательсем вĕрентнипе тата пулăшса пынипе районта иртекен чылай мероприятире, концертсенче юрлатăп. Тата конкурссене хутшăнатăп, малти вырăнсене йышăнатăп.

Хамăн тăван шкулта та пуҫламăш класра вĕренекен ачасем валли юрăсем юрласа, фортепианăпа выляса хамăн пултарулăхпа паллаштартăм. Ачасемпе вĕрентекенсем ман концерт вĕсене килĕшнине тăвăллăн алă ҫупса пĕлтерчĕҫ.

Кăҫалхи ҫурла уйăхĕнче хама Чăваш Республикинчи пултаруллă ачасен базине кĕртни ҫинчен пĕлсен питĕ савăнтăм. Малашне те юрă-кĕвĕпе туслă пулса ҫынсене савăнтарас килет.

**Тимофей МИХАЙЛОВ, 4-мĕш класс.**

# Юратнă шкулăн кăҫал юбилей



**Эпĕ виҫҫĕмĕш класра вĕренетĕп. Пирĕн шкул икĕ хутлă. Пĕрремĕш хутра кĕҫĕн класс ачисем вĕренеҫҫĕ. Пире питĕ кăмăллă вĕрентекенсем ăс параҫҫĕ.**

Кунтах столовăй вырнаҫнă. Унта тутлă апат ҫитереҫҫĕ. Шкулта библиотека, спортзал пур. Шкул пахчинче питĕ нумай улмуҫҫи ӳсет. Картишне хитре чечексем илем кӳртеҫҫĕ.

Пире кашни кун шкул автобусĕ турттарать. Ирпе пырса илет, уроксем хыҫҫăн каялла леҫсе хăварать.

Кăҫал шкул 130 ҫул тултарать. Кунтан пĕлӳ пухса нумай ăслă, пултаруллă ҫынсем вĕренсе тухнă.

Эпĕ хамăн шкула питĕ юрататăп, унпа мухтанатăп. Малалла та тăрăшса вĕренетĕп.

**Ксения МАЛОВА, 3-мĕш класс.**

# Ҫĕнĕ ĕмĕрте роботсем кĕтсе илĕҫ...



**Халĕ XXI ĕмĕр. Эпир хитре те илемлĕ шкулта вĕренетпĕр. Пулас ĕмĕрти шкула эп хама май ҫакăн пек куратăп.**

Пире шкулта робот кĕтсе илĕ. Кунта электронлă кĕнекесемпе тетрадьсем кăна пулĕҫ. Кашни ачан пĕчĕк сумккăпа планшет ҫеҫ. Доска вырăнне пысăк экранлă компьютер. Урокра роботсем вĕрентекене пулăшса пырĕҫ. Вăт ҫаплах манăн шухăшри шкул.

**Богдан Гаврилов, 3-мĕш класс.**

# Юратнă асатте



Манан асатте, Роберт Игнатьевич Петров, нумай сул «Санары» агрофирма ертӳҫинче тимленĕ. Вăл питĕ маттур, ырă кăмăллă, ĕҫлеме юратакан ҫын. Ирхине ирех ĕҫе тухса каять. Пушă вăхăчĕ сахал пулсан та, пирĕнпе, мăнукĕсемпе, канма та, выляма та вăхăт тупать. Халĕ асаттен ĕҫне манăн атте, Андрей Робертович, малалла тăсать. Эпир те, йышлă мăнукĕсем, асаттепе атте пекех тивĕҫлĕ ҫынсем пулас тесе шкулта тăрăшса вĕренетпĕр.

**Роберт ПЕТРОВ, 4-мĕш класс.**

# Муркка тусăм

**Хура-шурă пăнчăллă, симĕс кăвак куҫлă. Лăпкăскер, ачашскер. Кам пирки сăмах пырать-ши?**



Тĕрĕс. Ку манăн юлташăм – Муркка кушак. Унпа выляма юрататпăр. Вăл мана итлет: «вырт» тесен выртать, «чуп» тесен чупать. Ăслă йытта аса илтерет. Мĕн пĕчĕкрен ҫапла хăнăхтарнă.

Юратнă тусăма тутлă апатпа сăйлатăп. Вăл «Вискас», кăлпасси, сĕт, хăйма юратать.

Мурккăна илемлĕ тум тăхăнтартатăп, тепĕр чух аннепе ҫĕлесе паратпăр. Кушак капăр ҫӳреме юратать.

Мурккăн чылай тус-танташ. Вĕсем сунара ҫӳреҫҫĕ, пĕрле шăши тытса ҫиеҫҫĕ.

Апата ларсан Муркка аттепе иксĕмĕр хушшине хирĕнсе кĕрсе ларать. Эпир пиллĕкĕн мар, улттăн пурăнатпăр. Пултăрах. Вăл та ҫемье членĕ пекех.

Мурккăна юрататпăр та, хаклатпăр та.

**Елена СМИРНОВА, 6-мĕш класс.**

# Тăван килĕм асран тухмĕ



**Тăван кил... Сăмахĕ те чĕнсе каланăн туйăнать, кашни ҫыншăн вăл пĕчĕк ҫĕршыв. Мĕн чухлĕ ăшă туйăм, ҫутă ĕмĕт ҫуратать вăл пирĕн ăшра!**

Эпĕ хамăн юратнă килте пĕрремĕш хут кун ҫути курнă, вулама, ҫырма вĕреннĕ, тĕрлĕ ĕҫ тума хăнăхнă.

Ҫĕр чăмăрĕ ҫинче тем пек хитре вырăнсем пур пулсан та хам киле нимĕнпе те улăштармастăп. Мĕншĕн тесен тăван килте юратнă аттепе анне, пиччепе аппа пур. Мана вĕсем пурте юратаҫҫĕ. Темле йывăр вăхăтра та пулăшаҫҫĕ, тĕрĕс ҫулпа утма вĕрентеҫҫĕ.

Маншăн тăван кил вăл чăн-чăн крепоҫ. Ӳссе ҫитĕнсе темле вырăна ҫитсен те эпĕ хам тăван киле нихăҫан та манса каймăп, ĕмĕр тăршшĕпех килсе ҫӳрĕп.

**Анна НИКИФОРОВА, 7-мĕш класс.**

# Хавасла кунсем иртрĕҫ

**Хаваслă ҫу кунĕсем иртсе кайрĕҫ. Ҫулла эпир сар хĕвел ăшшипе килентĕмĕр. Кайăк-кĕшĕк сассине итлесе савăнтăмăр.**

Каникул та сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕ. Эпĕ каникулта тем тума та ĕлкĕртĕм, канма та, тантăшăмсемпе тĕрлĕ вăйă выляма та, ҫырлакăмпана ҫӳреме те, велосипедпа ярăнма та. Шывра иксе чăмпăлтатни халĕ те куҫ умĕнчех.

Ҫуллахи вăхăтра ĕҫĕ те нумай. Атте-аннене пулăшма та манса каймарăм. Пахчаҫимĕҫ шăварттăм, ҫум ҫумларăм, касу пăхма ҫӳрерĕм.

Мана ҫуллахи каникул питĕ килĕшет, ăна чăтăмсăррăн кĕтетĕп.

**Анастасия СЕМЕНОВА, 7-мĕш класс.**

# Ырă сутуҫă



**Ку ĕҫ ҫуллахи каникул вăхăтĕнче пулса иртрĕ. Велосипедпа ярăнса ҫӳреттĕм ун чухне. Пĕр пĕве патĕнче икĕ кушак ҫури макăрса ларать. Пĕри тепринчен пĕчĕкрех. Чарăнтăм.**

«Кун чухлĕ ҫитерсе усрарăм, халĕ пĕверен хăйсемех пулă тытса ҫиччĕр», – тесе шухăшланă-ши хуҫи е ҫӳп-ҫап тăкмалли ещĕкрен апат юлашкийĕсемпе тăранса пурăнччăр тенĕ-ши илсе килсе янă чухне? Е таркăнсем-ши? Пĕлеймерĕм. Шăнса кайнă, чĕтреҫҫĕ. Выҫăпа аптранă. Кусран тинкереҫҫĕ.

Шеллерĕм. Пĕчĕк ҫăмхасене хĕве чикрĕм те малалла ҫул тытрăм. «Сире кушак ҫурисем кирлĕ мар-и?» – ыйтрăм ҫул ҫинче хирĕҫ тĕл пулакансенчен. Кушак ҫурисене шеллесе пăхакансем пулчĕҫ, анчах та киле илсе каяс темерĕҫ.

Ҫурасене лавккара ĕҫлекен Валя аппа сутуҫă пăхса пурăнчĕ, килтен сĕт илсе килсе ĕҫтерчĕ, кăлпасси ҫитерчĕ, курупккана ҫемҫе татăк сарса пачĕ. Ача-пăча площадкинче пурăнса кайрĕҫ хайхискерсем. Эпĕ те кайсах ҫӳрерĕм вĕсем патне, ачашларăм, выляттартăм. Чун туртрĕ.

Кăштахран кушак ҫурисем ҫухалчĕҫ. Хуҫисене тупрĕҫ-ши? Валя аппа пек ыр ҫын аллине лекчĕрех!

Ҫутҫанталăка упрамалла тетпĕр. Чĕр чунсем те ҫутҫанталăкăн пĕр пайĕ мар-и вара? Эпир – ҫынсем, малтанах чĕрчунсене усратпăр, алла хăнăхтаратпăр, кайран вара кайса яратпăр – хӳтĕлхсĕр тăратса хăваратпăр. Пурин те яваплăха туйма вĕренесчĕ!

**Константин МИХАЙЛОВ, 8-мĕш класс.**

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăҫланать.